44-134

Арк. Эсхель.



# Ылттăн аласем

Чăвашгосиздат
1944 г.

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

## ЫЛТТĂН АЛĂСЕМ

Кайăксем çӳлте вĕçеççĕ,
Кулкалать ав çут тĕнче.
Ачасем хĕрсе ĕçлеççĕ
Техника кружокĕнче.

Каскалаççĕ те чутлаççĕ,
Пăралаççĕ, шăтараççĕ,
Савалаççĕ те хăйраççĕ,—
Вĕсемпе халь пыр, калаç!
Вĕри ĕç нихçан та каççăр,
Ват инструктор каламасăр,
Лăпланмасть.

Мишша тимĕре касать,
Коля винтă хытарать.

Ак вӗсен пулать часах
Ҫутӑ бронӗллӗ карап.

Мишша та маттур ӑстаҫӑ,
Коля та маттур ӑстаҫӑ,
Иккӗш те вӗсем васкаҫҫӗ,
— Ыранах ҫав карапа
Ҫурҫӗрелле ярӑпӑр!

Пысӑк мар-ха пирӗн Гера,
Ҫулӗ вунпӗрте пырать.
Анчах паллӑ „инженер“ вӑл,
Темӗскер те ӑсталать.

Акӑ ансӑр ҫулпала,
Савмалла та кулмалла,
Чупать унӑн паровозӗ
Хӑштин-хӑштин хашкаса.

Ăçтан тӳсĕн ырламасăр
Кунашкал паровоза!..

Шухăшлатăн, тĕлĕнен:
Мĕнле-ха çав ăптăр-каптăр,
Тĕрлĕ ванчăк тимĕртен
Игорь тунă çĕнĕ трактор?
Трактор тунă та, унтан
Тума тытăннă вăл танк.

Тулта кайăксем вĕçеççĕ,
Шав виçеççĕ тĕнчене.
Ак кунта хĕрсех ĕçлеççĕ
Тепĕр икĕ „инженер“.

Шур пиртен çунат караççĕ.
Мыскарасăр, çăмăлах,
Куçукпа Ваççук тăваççĕ
Виç моторлă самолёт.

Сăртсем урлă, шывсем урлă,
Çил-çунатлă, виç моторлă,
Кайĕ вăл вĕçе-вĕçе
Курăнми инçе-инçе.

Ачасем ĕçре васкаççĕ,
Тар тухать хăйра-хăйра.
Çирĕм пĕр тĕрлĕ ăстаçă
Вĕренет мастерскойра.
Çирĕм пĕр хăюллă маçтăр
Ну, мĕскер кăна тумаç-тăр!
Кунта çуккă мĕн кăна!
Мотоцикл, çилçуна,
Молотилка, лобогрейка,
Ик комбайн, виçĕ жнейка,
Винтовкийĕ, пулемĕчĕ.
Вĕсем пурте пĕчĕккеççĕ.
Е ытах пĕлес килсен,

Вĕсем пурте—модельсем.
Пурте çĕнĕ, пит аван,
Акă тупă, акă танк,
Тата инçех мар унтан
Ларать çутă самокат,
Вырăнтан кăна хускат—
Тапса сикĕ—пăх та кур,—
Эх, ачсемĕр, пит маттур!

Кайăксем çӳлте вĕçеççĕ,
Юлас марччĕ вĕсенчен.
Ачасем хĕрсе ĕçлеççĕ
Техника кружокĕнче.

Мĕнпурне тăвас пĕлсе
Çамрăк ылттăн алăсем:
Каскалаççĕ те чутлаççĕ,
Пăралаççĕ, шăтараççĕ,

Саваласçĕ те хăйраççĕ,—
Вĕсемпе халь пыр, калаç!
Вĕри ĕç нихçан та каççăр,
Ват инструктор каламасăр,
Лăпланмасть.

Редактор Л. Агаков.

НТ 00686. Подписано к печати 12/IX—1944 г.
Зак. № 1544. Тираж 5000 экз.

Типография № 1, город Чебоксары. Дом печати

Цена 50 коп.

АРК. ЭСХЕЛЬ

# Золотые руки

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ—1944
Чебоксары